**«Ку самана çынна кăшларĕ хытă…»**

Ку самана çынна кăшларĕ хытă,
Татса пайларĕ тĕллĕ çул çукки.
Тискерлĕх хуçнипе шăнса эп хытăп –
Ырра пулаймĕ хыпăнса çунни.

Тус-тантăшсем пĕрер-пĕрерĕн кайрĕç,
Тăлăхланса юлать шуйланнă чун.
«Чăнкăсене» кермен лартса пытарĕç,
Пире валли чул татăкĕ те çук.

Ура çинчен армак-чармакĕ кайтăр,
Умра ирех вылянтăр сар хĕвел.
...Пуçăм вĕçне варăнтарса хăварăр
Юпа пулса ӳсмелĕх пĕр йĕкел.

*2009*

*Станьял, В. «Ку самана çынна кăшларĕ хытă…» / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. ‒ Шупашкар, 2013. ‒ [Т. 2] : Поэзи. ‒ С. 425.*